К-57

„Канаш“ хаҫат ҫумӗнҫе тухат.

# КАПКӐН

4-мӗш №

Февралҫшӗн, 1927 ҫ. 2-мӗш ҫул тухат.

## Аптрал!..



Капкӑн хуҫи: ҫыннисем ӳкеҫҫӗ, тавар хакӗсем ӳкмеҫҫӗ. Мӗнле тӳнтер майлӑ тӑвамши: ҫыннисем тӑҫӑр, таварӗсем ӳкҫӗр.

# НОТ*) ПИРКИ.

Ырхан Васли хăй кăвак сухаллă, ҫалăш куҫлă пулин те, сăмахĕсене тăхлан пекех шăратса пыраҫ. Ытмарсем вăл. Ытмара пырсан шеф йаҫĕпе пĕр пирус, «Сафо» тенине, патăм та, вăл калаҫма тапратрĕ манпа. Пирус вăл хаклă мар, анҫах кăмăллă йапала, увашени. Выҫăх-ҫĕрлĕхсем вĕтелсе пыни йăтă-каҫкасем урса кайни ҫинҫен калаҫса илнĕ хыҫҫăн, Ырхан тӳрех:

— Пĕлтĕр хулара нот тенине илтнĕҫҫĕ епĕ, терĕ.—Нот, нот, теҫҫĕ хуларисем. Мĕнле хăйаматла йапала вăл нот—кĕселпе ҫийеҫҫи ăна, йе урăх йапалапа, йе тата суха тунă ҫĕрте кирлĕ пулакан йапала—ратио майлăскер...

Епĕ шăп итлесе ларатăп.

— Ҫӳрерĕм-ҫӳрерĕм кăҫал Шупашкара ĕҫ шырама, терĕ вăл малалла,—происвотиттĕлнăҫ трута ман пулаймарĕ. Пĕр ҫĕре кайатăп: ĕнер анҫах илтĕмĕр, есĕ кайран килтĕн, сывăрса ҫӳретĕн, теҫҫĕ. Ҫывăрасси епĕ ҫывăрса ҫӳреместĕп те, ҫĕрле, тӳшек ҫинҫе ҫеҫ ҫывăратăп. Тепĕр ҫĕре кайатăп:

— Виҫĕм кун кирлĕ пулнăҫҫĕ те, пайан кирлĕ мар ĕнтĕ, кĕсел хыпаймарăн, теҫҫĕ.

Ĕҫсĕррисене ĕҫ тупса паракан уҫрештенийе пыратăп (пиршă теҫҫĕ), ыран килме хушса йаҫĕҫ. Ыран пулсан йураҫ-ха вăл.

Каҫ пулҫĕ, ир пулҫĕ. Хашкаса ҫитрĕм ĕҫ тупса пама пулнă уҫрештенийĕ.

— Ну, мĕнле, ырă ҫынсем, мана ĕҫ тупса патăри, терĕм.

— Тупаттăмăрҫҫĕ те, анҫах ĕҫĕ ҫукҫке. Ҫук йапалана ăҫтан тупăн ĕнтĕ, теҫҫĕ. Ыран кил, терĕҫ йулашкинҫен.

— Капла манăн пĕр вăкăр хăй ҫăмарти таталса ӳкессине ҫиҫĕ ҫул сыхланă пек пулҫĕ ку. Пайанах тупса памăрши, терĕм.

— Ан калаҫса тăр тата! Пирĕн нот, терĕҫ.

Нот пулсан нот пултăр! Ĕҫлекенсен клупĕнҫе нот тăрăх йурласа парасшăн пуҫ мана, каҫпа кайса пăхас пулаҫ, тесе уттара патăм ĕҫ тупса паракан уҫрештениреи хваттерелле. Сывлăш уҫă—ĕҫсĕр аптранисене шăршласа ҫӳреме пит аван. Майрасем пур унта, йăттисем... Пушарниксем лашшисене хăвалса ҫӳреҫҫĕ. Пĕр пушарникĕ: но-от! терĕ те лашине ҫат ҫапрĕ. Кăсем те нота асăнаҫҫĕ-иҫ, тетĕп.

Хваттере ҫитсен калаҫкаласа ларсан, йулашки ҫăкăра шывпа йĕпетсе ҫинĕ хыҫҫăн, Ĕҫлекенсен клупне кайрăм.

Кĕртмеҫҫĕ. Пилет, теҫҫĕ. Йалсовет панă утостоверенийе те кăтартрăм, унпа та кĕртмерĕҫ. Менле кĕрес ку нотпа йурланине итлеме. Арап-аран вăрҫкаласа пĕр пӳлĕмне кĕрсе лартăм. Пӳлĕмĕнҫе хаҫатсем. «Капкăн» курăнсах каймасҫ. «Патрак» йатлă хаҫата тытрăм та вулатăп. Епĕ кирек-йепле хаҫата та йулашки страницинҫен вулама тапрататăп. Тытăнтăм та вулама... Пуҫа шарт ҫапрăм. Ҫăваш респуплĕкĕ ҫинҫенех ҫырнă. Ак мĕн унта ҫырнă (мĕн ҫырнине тапак хуҫĕ ҫине ҫырсах илтĕм):

«Московско-Казанской железной дороге потребуется до окончания сезона 3,679 рубщиков и 3.177 возчиков. **За исключением Чувашской области нигде недостатка в рабочей силе нет.** Недостающие в Чувашской области будут навербованы в Татарской республике» **).

Вутă каснă ҫухнехи пек хуп-хура тара ӳкрĕм. Ав, мĕнле ĕҫсем! Нотпа йурланине курасси пулмарĕ, вĕҫтертĕм вара хваттерелле.

Тепĕр ирхине ирех ĕҫ тупса паракан уҫрештенийе пыратăп та:

— Хаҫат, тетĕп.... «Патрак», тепĕп, суйа суйаҫи мĕн, тетĕп.

— Не мешшай! Нот, терĕҫ.

Темĕскер вăл нот? Ҫав нот пиркийех ĕҫсĕр йултăм ĕнтĕ. Ак ҫакăнта ларҫĕ ĕнтĕ мана ҫав нот тени, тесе Ырхан Васли ĕнси хыҫне ҫат! ҫапса илҫĕ. Ырхан Васлийе увашени туса тетĕр «Сафо» патăм та, нот мĕн иккенне ăнлантарса памасăрах, унпа ал парса уйăрăлтăм. Ҫапла, нот пиркийех Ырхан Васли ĕҫсĕр тăрса йулнă. Шел!

МАМИ.

*) Нот тесе—тăвас ĕҫе хăвăрт туса пĕтерме ҫарса тăракан йапаласене наукă кăтартнă пек сирсе йарса ĕҫе ăнăҫлă тунине калаҫҫĕ (научная организация труда).

**) Ку хыпара Ҫентăрта тухакан „Патрак" йатлă хаҫатăн 7(261)-мĕш нумĕрĕнҫе ҫапса кăларнă.

# Шăлтăрма.

(Йурăхсăр копператтивра).




**Мĕн куратпăр?**

Отдотсем тăрăх тавар хакĕсем ӳкесçĕ, çав вăхăтрах таварсем хăпарса пыраççĕ.

**Мĕн тумалла?**

Шăлтăрмин вĕренĕ çине (çӳлтен) дул çыхса пусмалла.

---

## Волокиттă.

Иртнĕ каçра
Ăш ыйхăра
Тĕлĕк тĕллентĕм.

Хам арăма
Суйса пама
Андах ирентĕм.

Çавах сире
Пайан пĕрре
Суйса парам-ха.

Мĕн курнине
Тĕппипеле
Кĕскен калам-ха.

Çĕр çинден те
Пĕлĕт çине
Шур хут куçат пек.

Çав йапалах
Ӳнтан каллах
Вĕçет, çăват пек.

Ку хутсене
Ухăсемпе
Çынсем переççĕ.

Андах теиле
Пĕррине те
Ӳкерейменççĕ.

Шур хутĕсем,
Вĕçекенсем,
Çаплах çăваççĕ.

Пĕлĕтпеле
Çĕр хушшине
Курнми тăваççĕ.

* * *

Волокиттă
Çăралат.
Волокиттă
Вăйланат.

Ç. ШĂПДАК.

# Питӗ хакла ларнӑ 1 пус.

(Те ҭӑн, те суйа).

Таҫти хуҫайствӑллӑ орканисатсине пӗр аҫҫикновкӑ хуҭӗ*) кирлӗ пулнӑ. Кирлӗ-кирлӗ, тупас пулат̆. Йараҫҫӗ ҫак уҭрештенирен пӗр слушӑшҭийе—Хветӗр йатлине кӳршӗри уҭрештенийе—аҫҫикновкӑ хуҭӗ ыйтма.

Пыҭӗ, кӗҭӗ...

— Мана пӗр листӑ аҫҫикновкӑ хуҭӗ кирлӗҭҭӗ те, параттӑр пулӗ, тет Хветӗр тус.

— Парас, йепле кирлӗ йапалана парас мар. Анҭах есӗ аҫҫикновкӑ хуҭӗ кирлӗ пулни ҫинҭен пирӗн патра хут хӑваратӑн пулӗ: Ху та пӗлетӗн,—аҫҫикновкӑ хуҭӗсен шуҭӗ пит тӗрӗс тӑмалла, отҭот парас йенҭен те аҫҫикновкӑ хуҭӗ ҫитмесен пит хӑрушӑ.

Ҫырса парат̆ Хӗветӗр тус ҫыру. — Аҫҫикновкӑ хуҭӗ парӑр, тет.

Илсе кайаҫҫӗ хутне ресоҭутси хуртарма.

Хӗветӗр тусӗ, пуҫа ҭиксе кӗтсе ларат̆. Унҭен те пулмарӗ, Хӗветӗр тус хуҭӗ пӗр вырӑнпа ҫитсе капланса таларҭӗ: пӗри—ресоҭутси хума хатӗрленнӗ вӑхӑтра—курах кайат̆: Хӗветӗр тус ҫырнӑ хут ҫинҭе штамп таврашӗ те ҫук, хуҭӗ Хӗветӗр тус ӗҫлекен уҭрештенирен мисемӗш нумӗрпе тухни нумӗрӗ те ҫук.

— Ку хут тӑрӑх йепле аҫҫикновкӑ хуҭӗ парӑпӑр? Кунта уҭрештенийӗн штампӗ те ҫук, хуҭӗ ҫине нумӗр те лартман. Йарӑр кайалла, хутне ҫӗнӗрен ҫырса килҭӗр.

Ассӑн сывла сывла утат̆ Хветӗр тус кайалла. Пырсан хутне машшинӑ ҫинҭе ҫаптарҭӗ, хуҭӗ ҫине икӗ ҫынна алӑ пустарса нумӗр ларттарҭӗ те, каллех вӗҫтерҭӗ аҫҫикновкӑ илме.

Ҫитрӗ, кӗҭӗ.

— Акӑ, илсе килтӗм, парса йарӑрҭӗ аҫҫикновкине хӑвӑртрах!

Ҫитет Хӗветӗр тус илсе пынӑ хуҭӗ ресоҭутси хурас ҫӗре.

Хуҭӗ хормӑллӑ, аласем пуснӑ, нумӗрӗ те пур.

«Парас пулат̆. 1 аҫҫикновкӑ хуҭӗ» тесе ҫырҭӗ уҭрештенийӗн пуҫлӑхӗ. Шухӑшларӗ, шухӑшларӗ те пуҫлӑх, аҫҫикновкӑ хуҭӗ хакне Хӗветӗр тус ӗҫлекен уҭрештенирен илес пулат̆, тесе ҫырса хуҭӗ.

Уҭрештени пуҫлӑхӗ ресоҭутсийӗ тӑрӑх Хӗветӗр туса пӗр аҫҫикновкӑ листи параҫҫӗ, уҭрештенийӗн пуххалтерийӗ кӑшӑр-кӑшӑр пӗр аҫҫикновкӑ хуҭӗ мӗн ҭухлӗ тӑнине шутлама пуҫларӗ: аҫҫикновки такҫанхи «Министерство Земледелия»ран йулнӑ, кивӗ хармӑллӑскер пулнӑ мӗн. Пуххалтерийӗ шутларӗ-шутларӗ, аран шутласа кӑларҭӗ, ҫак уҭрештенийе 1 аҫҫикновкӑ хуҭӗ 1 пуса ларнӑ мӗн.

Хӗветӗр тус ӗҫлекен уҭрештени ҫак 1 аҫҫикновкӑ хуҭӗшӗн 1 пус укҫине тӳлесе татнӑ пулӗ, тетпӗр. Укҫине пуштӑпа йанӑши, йе Хӗветӗр тусах кайса леҫтерсе шҭот илтернӗ, ӑна пӗлеймерӗмӗр.

Вӗҫӗнҭен шутлама пӗлекенсене пӗр сатаҭҭӑ паратпӑр. Сатаҭи акӑ ҫакӑ. 1 аҫҫикновкӑ хуҭӗ уҭрештенийе 1 пуса ларнӑ, мӗн ҭухле ларнӑши ҫак аҫҫикновкӑ хутне пӗр уҭрештенирен тепӗр уҭрештенийе куҫарасси? А? Мӗнле? Шухӑшласа кӑларайманӑри! ҫапла ҫав. Ун пек сатаҭсене шутласа кӑларасси шур премӗк ҫинийех мар ҫав.

Та—с!

ХУРҪ.

---

# Йамӑта ӗмӗтленекен.

Йала комантировккӑна кайакан пӗр слушӑшҭи комантировккӑшӑн тӳленӗ укҫине пӗтӗмпех майрине парса хӑварат̆. Майри ыйтат̆:

— Пӗр пус укҫасӑр мӗнле пурӑнӑн вара йалта, тет.

Лешӗ:

— Йалта ҫерҫи вилмест теҫҫӗ, тет.

— Есӗ ҫерҫи-и мӗн, тесе ыйтат̆ унтан майри:

— Ҫерҫи мар та. Пире йалсоветсем тӑрантараҫҫӗ, ҫерҫийе халӑх тӑрантарат̆, тет ӑна хиреҫ.

---

*) Укҫа илме ҫырса памалли хут. Аҫҫикновкӑ хуҭӗ ҫине мӗн ҭухлӗ укҫа кирлӗ пулнине ҫыраҫҫӗ те, вара Финанс ком:ссариаҭӗ ҫав хут тӑрӑх укҫа парат̆.

## Пурнăçа кĕртмелли план.

— «Капкăна» вулакансем телейлĕ пулĕç—вĕсем пÿрократтисăмпа волоккиттăрая çăлăнĕç,—тесе сопор тăвĕ тăрринçе вĕрентсе пĕтерсен, «Капкăн» хуçи ту çинçен аннă. Унăн вĕренекенĕсем киле пырсанах пÿрократтисăмпа волоккитгăна пĕтермелли план тума пуçларĕç. Проттоккол çине вăл план çакăн пек кĕрсе йулçĕ:

1. Тĕплĕ план тума тĕплĕ комиççи пухмалла.

2. Пÿрократтисăмпа волоккиттă пит усал йапала, вĕсене çăнах пĕтермелле. Çавăнпа уйесри уçрештенисене вăл усал йапала çинçен 5 çирккуçарлă çыру çырмалла. Уйессен вулăссене тĕплĕрех ăнлантарас тесе вуннă çырмалла.

3. Пирĕн уçрештенисенçе ĕлĕкхи çынсем нумайии касаť. Çавăнпа уçрештенисене пионерсене кĕртмелле, вĕсем çитĕнсе çитиççен ашшĕсемпе амăшсенех хăвармалла.

4. Уçрештенисенçи тăван йĕркисене тĕрĕслеме тунă комиççи урлă кам кампа тăванли çинçен Саксран выпискăсем илмелле.

5. Пÿрократтисăмпа кĕрешесси çинçен кашни сотрутнĕк сетелĕ умнех лосăнксем çакса тухмалла. Пÿрократтисăм çинçен кам мĕнле шухăшланине палăртма 200 ыйтуллă анкеттă тумалла. Кашни пÿлĕмех Ортшоникитçе сăнне çакмалла.

6. «Без доклада не входить» тенĕ ылтăнлă пуквăсемпе çырнă хутсем вырăнне, прийом мĕнле сехетре пулнине кăтартса çырмалла, йе çакăн пек приккас кăлармалла. «Йалтан килекен çынсемпе калаçма, тата вĕсен ĕçĕсене туса пама сторăша хушатăп. Ун пек ĕçсемпе мана кансĕрлемелле мар»...

7. Çăвашла калаçас текенсене çăвашла калаçма çармалла мар, ун вырăнне çăвашларан вырăсла куçарса паракансене тупмалла. Ответне тепĕр кунтах памалла.

8. Ку таранçен тунă комиççисене шутласа кăларса, кирлĕ маррисене пĕтерме пĕр пысăк комиççи тумалла.

9. Ку пысăк ĕç укçасăрах пулас çук, çавăнпа çак кампанийе иртерме çĕнĕ çметтă тумалла.

10. Ерне, пирĕн уçрештенире пÿрократтисăмпа волокиттă çук, çавăнпа ку кампанийе ыттисем мĕнле иртернине пăхса тăмалла.

АРИС.

## Увпорсов.



— Илтни ес Увпорсовра пÿрократтисăм пĕтĕмпех пĕтсе ларнă, тет.

— Суйатăн. Апла пулма пултараймасť. Мĕнле апла?

— Мĕн мĕнли? Упорсов йатлă уçрештени çук та вăл тĕнçере, çук уçрештенире ăçтан пÿрократтисăм пулмă пултараť.

— Е?

## Ҫӗвӗҫ.



— Мана телопроисвотиттӗле илместӗри?
— Ăҫта ӗҫленӗ ес?
— Епӗ ҫӗвӗҫӗ. Хутсем ҫӗлесе пыма пултаратăп.

## Пӳрократ.

Пиҫҫе пӗрре йал канашне
Хут ҫыртарма карăм тет;
Ҫунса кайнă, пӳрт-ҫурт тума
Вăрман илме шут тытса.
— Кайах Павăл, матрус патне
Ҫак хут ҫине ал пустар!
Тесе хуҫӗ ҫекреттарӗ—
Ҫӗр-ҫӗр ҫырса перипе.
Матрус пайан, мӗн иртенпе
Хутсем ҫине ал пусаť;
Ал пусаť те, купа тăваť—
Ҫӗклем тулсан лерелле...
Уйăх ҫуртан, кантуралла
Шăвăнтартăм тет пиҫҫе;
— Аран-аран, тепле вара
Пиҫҫен хуҫӗ тупăннă.
— Виҫ уйăхран—шут пырсассăн,
Килсе пăхăн, терӗҫ те—
Папкă ăшне ҫиксе хуҫӗҫ.
Хутсем ăшне айала...
Виҫ уйăх та иртсе карӗ
Хуҫӗ ҫуккă... Курăнмасť...

## Пуҫа килнӗ шухăшсем.

Совет аппараҫӗ лайăх ресоҫутсисем йышăннă хыҫҫăн та ҫителӗклех лайăхланса ҫитмен, сăмакун аппараҫӗсем ресоҫутсисемсӗрех лайăхланса пыраҫҫӗ.

Аппарата *) хресҫенсем патне ҫыв-хартас пирки йышăннă ресоҫутсисене лав ҫине тийесен мисе лав пулӗҫши? Ҫав лавсене ҫăваш лаши йала туртса ҫитерӗ-ши?

Пӳрократ пуласси телопроисвотиттӗл ҫухнех паллă.

Уҫрештенийе пӗр-пӗр ҫын пӗр-пӗр ӗҫ туса пама ыйтма пырсассăн, ӗҫне хăвăрт туса ан пар, хăвăрт туса парсассăн ҫынни ҫасах манаť, ҫулталăкҫен тăссан ҫулталăкӗпех асанаť.

Ҫине-пӳне пăхмасăр машшинисткăна та илмеҫҫӗ.

Саҫҫетанисемпе сопранисене ҫӳресех вăхăт иртерекен ҫынсем ҫулталăкра миҫешер йӗм ҫӗтеҫҫӗ-ши?

Хăш-пӗр саветуйушҫийе, лашасем ҫине ларса ҫӳренипе сахал, слушăшҫисем ҫине хăпарса ларма йуратаť.

Хăш-пӗр ҫынсем йалсовета кӗрсессӗн ҫеҫ ӗҫме вӗренеҫҫӗ, унҫен вӗренме вăхăҫӗ пулайман пуҫ.

«Капкăн» пулмасан совета кӗрестекенсем тата нумайрах пулмалла.

Вилсессӗн Сакăса кайса рекистратси туса килмесӗр никам та вилнӗ ҫын тесе калас ҫук.

*) Совет аппаратне.

Улпут-тийек ал пуснă та
Татах таҫта ăсатнă.
Ҫапла вара, малтан йалтан—
Кантур урлă тийек патне,
Тийек урлă хула ҫинҫен—
Шупашкартан кутăн тухса,
Ҫулталăкра ҫӗклем пулса
Пиҫҫе «откас» илтӗм тет.

К. РУССАКОВ.

# Вăт, пӳрократ!

— Ей, Иван Павăлӗ! халех пур йалканашсене çыру çыр. Штопă вĕсем волокиттăпа кĕрешӗĕр, терĕ çекреттарне ӗĕнсе вулĕçтăвком претçетатлĕ.

— Хорош!

— Ӗасрах!

Пĕр 10—15 минутран пур йалканашне те хатĕрленĕ. Хутсем претçетатлĕ умĕнӗе выртаççĕ.

— Ма мана çеç алă пусмалла турăн? Ху та пус!

— Хорош!

— Телопроисвотиттĕлне те пустар.

— Хорош.

— Суйа хут тийĕç, çав переппĕсӗĕкне те пустар.

— Хорош.

— Сторожа пар, вăл та пустăр.

— Хорош.

— Пур те пĕр тĕслĕ ӗернилпе пуснă. Пурне те хам пуснă, тейĕç. Прикасывайу переписаҫ!

— Хорош.

20 минутăран тĕрлĕ тĕслĕ ӗернилсемпе алă пуснă ӗиркуӗар выртӑҫ.

— Ма хама малтан пустармарăр? Превышшени ӗина?! Переписаҫ!

— Хорош.

Хыпаланӗăк çекреттар 7 хутӗен çырса паӗĕ. Анӗах нийепле те май килмерĕ.

— Утите вы вçе к ӗорту! терĕ те претçетатлĕ хăй çырма тытăнӗĕ.

Çак хутпа сире волокиттăпа кĕрешме ӗĕнетĕп. Çак хута илсен, илнине нароӗнăйпа пĕлтерĕр. Хăçан, тата кам илнине çырăр. Хутне пиӗетлесе йарăр. Васкарах тăвăр. Тоӗкăсене, сăпеттуйсене лартма ан ӳркенĕр.

Вĕçтерӗĕç йамшăк лашисем йалсене хутпала.

Тепĕр кунне ирех ĕçтăвком умĕнӗе 10—12 луланут. Вĕсем йалсенӗен роçпискăсем илсе килнĕ. Пурте ӗеретпе претçетатле кĕртсе параççĕ.

— Лайăх алă пусман, тесе хуӗĕ пĕрин çине ӗаплă пуçлăх,—восвратит.

— Нет сăпеттых, восвратит.

— Нет татты, восвратит.

— Нет исхоҫашӗехо номеру, восвратит.

Çапла пурне те каҫалла салатса, вĕсем хыççăн ĕçе тĕплĕ тума вĕренмелли прикас салатрĕ. Роçпискăсем йама çĕнĕрен прикас çырӗĕ.

Вăт, пӳрократ! Ç. ШĂПӖĂК.

# Ампулатторинӗе.

Ампулатторинӗе ӗирленĕ çынсенӗен карлĕ мар ыйтусем ыйтса пĕтереççĕ. (Хаçатран).



Хвершăл. Санăн аçу-аннӳ хăçан та пулсан ӗирлени?

Песприсорнăй аӗа. Пĕлместĕп.

Хвершăл. Аслаçупа аслă аннӳ тапак туртни?

Песприсорнăй: Пĕлместĕп.

Хвершăл: Мĕнле пĕлместĕн?

Песприсорнăй. Епĕ атте-аннесĕрех çуралнă.

# Тăнланайман.

— Ăçта кайан, Матви пăйахам?

— Шупашкара.

— Мĕншĕн?

— Ман аӗана Шупашкарта «Капкăна» çаклатнă, тет. Çавна кайса пăхас тетĕп. Кăрлаӗ.



## Кунти çук.

Ӟаваш-Сурамӗнӟи (Йетӗрне уйесӗ) вулăсри пулăшком претçетаттĕлĕ Соловйов йулташ, хуп-хура шыва ӳкнĕ, Ӟаваш-Сурамĕ тăрăх ӟупса пыраҫ. Ман тĕле çитрĕ те:

— Йулташ! Есĕ пĕлместĕни çак сăмах мĕне пĕлтернине?—терĕ те, мана пĕр хут кăларса та тыттарӟĕ.

Ку хута Йетĕрне уйесĕнӟи пулăшком çыраҫ мĕн. Хуӟĕ ак çапла тапраҫ:—«Придавая важное значение... **нищенствующему контингенту** и в целях борьбы с ней провести точный учет **нищенствующего контингента**»...

Епĕ халиӟӟен илтмен те ку сăмаха, мĕн калассине те пĕлмерĕм, вара словар çине пăх терĕм.

— Пайан кунĕпе шыраса та словар тупаймарăм, терĕ.

— Апла пулсан «Капкăн» йулташран ыйтса парам сана, вăл ăнашкал сăмахсене пĕлекенӟӟĕ, терĕм.

Çавăнпа «Капкăн» йулташ сана тархаслатăп! Çав **контингент** тени мĕне пĕлтернине каласа парсамӟӟĕ.

«Капкăн» тусĕсенӟен пĕри

**«Капкăнран:»** Нищенствующий контингет тенине ăнланаймастăри? Хм... «Нишӟи» тени ӟухăн тени пулаҫ. «Контингент» тени кунти (çамкари) нет (çук) тени пулаҫ. Пĕтĕмпе каласан çамкара çукран ӟухăна (ыйткалакана) тухнă пулăшком тени пулаҫ пулмалла.

## Çирĕм пĕрле.

Урал оплаçĕнӟен Акалински йалтан (Иарккoв районĕ) пĕр ӟаваш çыраҫ: «Акалински йалсовет претçетаттĕлĕ Пуӟановккă йалне пуху тума пыраҫ те, пуху пĕтсен картла выӟама тапраҫ», тет.

Косырнай туссем пыӟӟăр сана, хастарлă йалăн хастарлă йалсовет претçетаттĕлĕ! Леш, милитси майлă салтакĕ те пытăр. Салтак вăл аван карт. Ан хăра унтан!

## Сиввине-ăшшине курнă вĕренекенсем.

Халăх сурсан кӳлĕ пулаҫ, пĕр çын сурсан типсех пыраҫ, тенĕ.

Ишекри (Сĕнтĕр вул.) 1-мĕш сыпăклă шкулта вĕренекен аӟасене каникула йараӟӟен, шкула вутă турттарнăшăн укçа пама, кашни аӟаран 50-шар пус пуçтармалла туна. Унта вĕренекенсем пĕӟĕкçĕ майĕпе, тата хăшĕ-пĕри ӟухăн çын аӟисем пулнă пирки, çав укçана тупса парайман. Тӳлеймен аӟасенӟен каникула кайнă ӟухне пуринне те сумккисене кĕнеки мĕнĕпех туртса илсе йулнă. (Йĕплĕ хулă).

Маттур уӟитлĕ! Похваӟнай лист парас ăна. Листи çине «шкул пӳртне ăшăтма тăрăшакан мухтава тивĕçлĕ уӟитле йурăхсăр çынсене «ăшăтма» йуратакан «Капкăнран» панă похваӟнай лист», тесе çырас.

## Кашкăртан йытă пулас çук.

Авантей йатлă аван çын пире çапла çырса пĕлтерет:

«Мускавра аслă шкулта вĕренекен Тупай-Ĕсмел çынни Иван Çеменăв каникула килсен ӟиркӳсене çӳрерĕ, комсомолĕссен сопранисене пырса та пăхмарĕ. Каккуй унта пырса курма: хăйĕн йамăкĕн комсомол пилетне те кăмакана ывăтса çунтарса йанă», тет. Совет аслă шкулĕнӟен кăларса пупсен аслă шкулне кĕртес ăна. Йамăкне, комсомолта тăнăшăн, хĕсĕрлесе çылăха кĕнĕшĕн «çылăхлă» çынсем пурăннă çурта йарса пăхас.

## Пур инкек те çавăнтан.

— Ыр ĕçрĕмĕр, ыр çирĕмĕр, нисхта намăс курмастпăр, тесе йурлаççĕ Ваççилйĕвпа Марккăв.

Вĕсем Хурамал кулĕçтăвкомĕнӟе ĕçлеççĕ. Çавсем пĕрре Тимеш йалне пырсан, йалсовет претçетаттĕлĕ патĕнӟе

# Пĕр ӳкнĕ йапала тепре ӳкмест.



**Тавар илекен:**—Мĕнле? Тавар хакĕ ӳкнĕ, теççĕçке, сирĕн хăпарнă пек туйăнать?

**Прикашчăкĕ:** Кхм, фиçиккă саккунне пĕлес пулать...

**Тавар илекен:**—Ай-уй!.. Тĕттĕм çын тĕрлĕ саккуна ăçтан пĕлтĕр-ха?

**Прикашчăкĕ:**—Пĕлмесен, итле: Фиçиккă саккунĕ,—йапалана ӳкерес пулсан малтан хăпартас пулать, тет, унтан ӳкерме пулать, пĕр ӳкнĕ йапала тепре ӳкмест, пĕр вырăнтах выртать, тет. Анлантăни?

**Тавар илекен:** Ăнланмасăр, ăнлантăм... Çавăн пек пулать ĕнтĕ вăл,—калăпăр çапла: йешĕлĕ Шупашкар тĕрминчен пасаралла анас пулсан, малтан сăрт çинче ларакан тĕрме патне пырас пулать. Унтан тухсан,—тин пасаралла анас пулать, çапла-и?

---

ĕçсе тултарнă та, пит ӳссĕр пулнипе портфĕлне çухатса хăварнă. (Пĕлекен)

Çухалтăр-ха вăл портфĕлĕ. Портфĕлсенче кивелсе кайнă хутсем выртакан. Портфĕл пулнă пиркийех вара хăш сайавленисем кивелсе кайаççĕ, мĕншĕн тесен портфĕле кĕрсе ӳкнĕ хутсене хуçкатса йарасси çинчен хуçисем шухăшласах каймаççĕ. Портфĕлсем тĕп пулччăр, мухмăрпа аптранисем сывалччăр!

## Нумай çывракан ыйхинчен киленнĕ.

Йапалана хыпаласа пăхмасăр ĕненме хĕн, тенĕ вырăссем. Хăш çухне хыпаласа пăхни те пулăшсах каймасть пулмалла çав.

«Шурчари (Шуп. вул.) ампулаторине кĕрсен тӳрех куç тĕлне çапла çырса çапни курăнать:

> Прием больных ежедневно от 9 до 3 часов, кроме праздничных дней.

Анчах ку çырса çапни ампулатторине пынă çынсене лăплантарма çеç пулас, мĕншĕн тесен Песпоротăв хвершăла ампулатторине пырасса йаланах 12 сехетчен кĕтес пулать» (Крак)

Кĕтĕн сывалас тесен! Песпоротăв халĕ пороти (сухалĕ) шăтмасан пулĕха. Сухалĕ шăтсан ăсланĕ.

# „Капкăн“ архивĕ.

## „Ревкомиссия“ — ҭăвашла каласан çухăракан комиççи.

Вĕсем ахаҭ ҭух çулталăкĕпех çывăраççĕ. Сиссесем умĕн йăшăлтатма пуçлаççĕ, сиесĕ сăмса тăрне пырса ларсан, „Капкăна“ илтĕнмеллех çухăраççĕ. Çухăракан комиççисем йалсовеҭĕсен те, кооператтивсен те, тата çавăн пек йышши ытти йапаласен те пур.

Т у ç и вулăс, Кĕстемĕр йалсовеҭĕн ревиçи комиççийĕ ыран суйлав тенĕ ҭух, çапла çухăрса йанă (Ку та ҭăвашла çухăрмасť, аçа çапашшĕ, тарам йалта пурнаť!):

**„Председателю ревкомиссии.**

В виду того, что ревизионная комиссия д. Кюстимеры не в курсе своего дела и вообще отказывается производить ревизию, а потому Кюстимерский сельсовет просит вас прибыть для ревизии сельсовета не позднее 30 января.

Председат. СМОРОДИНОВ.

«К а п к ă н р а н». Паллах... Çухăраканĕ „не в курсе своего дела“ пулсан, йалсовеҭĕн ĕçĕсем тап-такăр та, йап-йака пуҭ ĕнтĕ.

Ах Сморотин, Сморотин,
Мĕнле отҭот турăнипи?
Хăш йеннелле тайăлса
Суйлавалла тухрăнши?—

темелле еп сăвăçă пулсан.

## „Ывăл турăсем“

Йалхуçайствп налокне хурас ĕçре кăçал вырăнсенҭе ҭилай çитменлĕхсем пулни çинҭен хаҭ пурте пĕлеççĕ. Анҭах ку таранҭĕн пуйансен турри кам иккенне шыраса тупайманҭĕ-ха. „Капкăн“ ку тĕлĕшпе пит хаклă открытти турĕ:

„Туçи вулăсĕнҭе Румйантсĕв йатлă виçĕ ывăл турăллă çыв пурнаť... Унăн икĕ çăм таптармалли арман, тăвата поставлă шыв арманĕ, икĕ ĕне, икĕ лаша, тата ытти выҭăх ҭĕрлĕх те, Пойăн пек икшер мăшăр. Çак Румйантсăва налокран 75 проҭҭăн çкитка панă. Мĕншĕн? Унăн виçĕ ывăлĕ аслă шкулсенҭе вĕреннĕшĕн“.

«Капкăнран»: Туçи вулĕçтăвкомне сатаҭ паратпăр: çав Румйантсăвăн аслă шкулсенҭе 5 ывăлĕ вĕреннĕ пулсан, сирĕн саккун тăрăх ăна вулăс пӳтшетĕнҭен миçе проҭҭăн хушса памалла? Тепĕр сатаҭ: аслă шкулсене йанă ҭух: «Дано сие Румянцеву, что он из бедной семьи... для поступления в ВУЗ», тесе хут вараласси хăçан пĕтмелле? Виççĕмĕш сатаҭ Çутă Комиссариатне: Румйантсĕвсене аслă шкулсенҭе камшăн вĕрентмелле?

## Сылтăм алли сулахайĕ мĕн тунине пĕлмест.

Ĕçĕ пĕҭĕккĕ, ӳншăн «Капкăна» ҭăрмантарма та кирлĕ мар пек. Ĕçи вăл: «Çĕрĕç комиссариаҭĕ «Канашра» çил-тăвăлпа ӳкнĕ йăвăçсене сутатпăр тесе пĕлтерӳ çапрĕ.

Хресҭенсем васкасах ӳкнĕ йăвăçа кăларма ортĕрсем илҭĕç.

Çав вăхăтрах, çав уҭрештенисевех, пралук тăрăх лесниҭҭисем çакăн пек хут вĕçет, çапла та капла, ввиду этого принимая во внимание и вообще, тăвăлпа тăкăннă йăвăçа хресҭенсене памалла мар, торки туса сутмалла. Панă ортĕрсене кайалла илмелле.

Кайран темшĕн... имея ввиду внимания деревне ордеров... панă ортĕрсемпе вăрман памалла.

«Капкăнран» Хăйсенеҭҭĕ, хăйсенеҭҭĕ хуçса кайасҭĕ тăвăлпа. Вара торки туса сутасҭĕ, кайран парасҭĕ «Капкăн» архивне.

## Йеркĕн*)

### Майра патша.

Туран анҭĕç, Иетĕрне хулинҭен,
Çитсе ҭарăнҭĕç Шупашкар тĕлнелле.
Майра патша тухрĕ çыран хĕррине,
Сырса илҭĕç ăна, кăшкăрҭĕç «урра»!..
Сас йанравĕ ӳкрĕ леш йенҭи Йăлăмра.

Унтан малалла Шупуççыннин пекех;
ăмăртса, ыр сунса сурăх кĕтӳ пек...

*) Шупуççыннинне вăрласа çырман. Унăн «Майра патши» 18 мĕш ĕмĕрте пулнă, пирĕн еспĕр пурăнакан ĕмĕрте.

Хыҫӗнҭен, утрӗҫ вӑрттӑнрах ҫӗрелле...
Тепӗр кунне Капкасра—
Виҫҫӗр тенкӗ алӑра.
Майра патша кӑмӑлне.
Хӑшӗ лекрӗҫ ыр вырӑна,
Хӑшӗ карӗҫ вӑрмана.

## Йӗтӗн вӑрри.

Хӑш ҭухне пирӗн хӑшӗсем никамран ыйтса тӑмасӑрах 4-5 пин тенкӗ те пӗр самантрах ҫилпе вӗҫтерсе йараҫҫӗ. Тепӗр ҭухне... 46 пӑт та 30 кӗренкке туртакан йӗтӗн вӑррине те ниҫта ҭикме пӗлмеҫҫӗ. Аптранипе Ӗҫлекенсемпе Хресҭенсен Инҫпексинҭен—ӑҫта хумаллине кӑтартса пама ыйтаҫҫӗ.

Ҫавнашкал Караҭ вулӗҫтӑвкомӗ ҫырнӑ тӑрӑх:

«Кунти *) вулӗҫтӑвком склатӗнҭе 46 пӑт та 30 кӗренкке йӗтӗн вӑрри нуррине пӗлтеретпӗр. Ӑна 1923-мӗш ҫулта акма илнӗҭҭӗ, хаҭ ӑна склатра кашни кун шӑшисем ҫийеҫҫӗ.

Ҫакӑн ҫинҭен вулӗҫтӑвком хӑйӗн 744 №-лӗ хуҭӗпе 1926-мӗш ҫулӑн авкустӑн 24-мӗшӗнҭе Ҫӗрӗҫ Комиссариатне пӗлтерсе вӑл йӗтӗн вӑррине ӑҫта хумалла тесе ыйтнӑҭҭӗ. Ун ҫинҭенех 1926-мӗш ҫулӑн авкустӑн 25-мӗшӗнҭе 910 №-лӗ хутпа Уӗҫтӑвкомран ыйтнӑҭҭӗ. 1926-мӗш ҫулӑн авкустӑн 24-мӗшӗнҭех 3886 №-лӗ хутпа уйесри Ҫӗруправленине пӗлтернӗҭҭӗ. Тата вулӗҫтӑвком претҫетаттӗлӗ ун ҫинҭен Уӗҫтӑвкомӑн «сарлака» пленӑмӗнҭе Ҫӗрӗҫ Комиссарне токлат туса панӑҭҭӗ. Лешӗ хӑйӗн «плок-ноҭӗ» ҫине ҫырнӑҭҭӗ.

Анҭах вулӗҫтӑвком ҫапла йӗркепе ыйтса, токлатсем туса ҫӳренӗ пулсан та, ку таранҭҭен ҫав йӗтӗн вӑррине ӑҫта хурас тӗлӗшпе Ҫӗрӗҫ Комиссариатӗнҭен... «не обращено **должностного** внимания». Ҫавӑнпа та Караҭ вулӗҫтӑвкомӗ ниҫта кайса кӗреймесӗр Ӗҫлекенсемпе Хресҭенсен Инҫпексине пӗлтерсе, ҫак «ҭирлӗ» ыйтӑва пӗтерессине хӑвӑртлатма ыйтат̆»...

ВӖК Претҫетаттӗлӗ ЙЕФРЕМӐВ.

«**Капкӑнран**» Ай-уй тур-тур **Йехремӑв**! Ма малтантарах «Капкӑна» ҫырса пӗлтермерӗн? Хаҭ те ес вулӗҫтӑвком претҫегаттӗлӗ-и-ха?

---

*) Вулӗҫтӑвкомшӑн ҭӑвашла куҫарса ҫыратпӑр—ҭӑл «Капкӑн» ӗҫӗ пулмасан та... мӗн тӑвас ӗнтӗ. Караҭ вулӗҫтӑвкомӗ ҭӑвашла ҫырма шухӑшламас̆т̆ те пулсассӑн...

ҬАВАШ КРОККОТИЛӖ.

## Кам телейӗпе, кам хӳтлӗхӗпе Кромӑв Лессакра.

I.

Кромӑв Кушлавӑш леҫниҭҭӗствинҭе пурӑнат̆ те, нимӗн те шухӑшламас̆т̆. Снай хӑй пӗлнӗ пек пӑтратат̆. Шалу сахал параҫ вӗт! Мӗн вӑл 65 тенкӗ? Пӗрре кӑна сурма та нестойӑт. Хӑнасене ҭӗнес пулат̆, хӑнасем нумай. Тавай хам ӑс пӗлнӗ пек хытланса пӑхам-ха тет. Хам инитиаттивӑна кӑтартсан, вытвишентсӑ туса хумӗҫи, тет.

Карӗ вара вӑрман тӑрӑх арҫури пек ҫӗмӗрттерсе! Вӑрман улат̆, кашлат̆, шатӑртатат̆.

II.

Кромӑв, мухтав турра, хӑй шухӑшланӑ шухӑшсем патне ҫитрӗ. Вытвишентсӑ пулса тӑҭӗ. Ҫӗрӗҫ комиссариаҭӗ ӑна Шӑмӑршӑ леҫхосне насnаҭит тӑват̆. Ҭӑнах та уна Кушлавӑш леҫниҭӗствинҭе йӗркесӗр ӗҫсем тунӑшӑн сута памалла тунӑҭҭӗ те. Анҭах мӗн ун ҫине пӑхмалла? Шупашкара килсен, кунта тӗрмене хупмаҫҫӗ. Вӑл пустуй йапала. Ана ҭинавникле ӗҫлекенсене ҫеҫ—ака сана сута парӑпӑрха, тесе хӑратаҫҫӗ.

III.

Кромӑв хӑй шуҭӗпе Шӑмӑршӑ леҫхосне кӗнипех нетовоҭнӑ-ха.

– Рас вытвишентсӑ, тавай шаларах кӗрес, тет.

– Е-ей апла йурамас̆т̆, теҫҫӗ вӑл хӑтланнине пӑхса тӑракансем—ӑҫтаха сана ҭапӑркка? Ҭим кӑтартапӑр.

Ҫӗрӗҫ Комиссариаҭӗ ҭапӑркка кӑтартат̆. Мӗнле ҭапӑркка теттӗр есӗр хӑвӑр шухӑшпа? Леш, ҫын пахҭине улма вӑрлама кайнӑшӑн аҫу шыв ҫине ҭиксе шӳтерсе кутран ҫапакан ҭапӑркка-п? Ҫук. Ун пекки-и вара. Ӑна Лессака ӑслӑ вырӑн параҫҫӗ. Вӑл Каҫалта ҭухне 65 тенкӗ илетҭӗ—халӗ—130 тенкӗ. Куратри! 2 хут ытларах шалу илекен пулҭӗ никкутнӑй аҭи!!

Ей, есӗр айалтисем! Сире шалу ситетти? Тавай Кромӑв ҫулӗпе кайар. Шалу ӳстерӗҫи.

ПИНЕР.

## Вырӑнтан вырӑна куҫма йуратакансем.

Пурнӑҫ вӑл мулкаҫӑ йеверлӗ, пит хытӑ тараӗ. Нийепле те ӑна хӑринҫен йарса илмелле мар.

Пӗре епӗ, ҫил-тӑмансем иртсе кайсан, Шупашкара карӑм. Шупашкар Шупашкарах ӗнтӗ вӑл, йалпа ӑна танлаштараймӑн, мӗншӗн тесен унта майрасем пурӑнаҫҫӗ, уҫрештенисем пур унта, ҫурҫӗсем пирӗн йалсовет ҫуртӗнҫен 50—60 хут пысӑкрах. Пивнойсем, пасарӗ, пӗр йал лармаллӑх вырӑн йышӑнса ларакан пуш пахҫа пур... Пурте пысӑк, ҫурҫӗсем те пысӑк, ҫыннисем те пысӑк, пуш пахҫи те пысӑк, каҫакисем те ӑслӑ, хутла вӗреннӗ: сапурсем ҫине ҫапнӑ хутсене вулама пултараҫҫӗ: мӑнӑскерсем ик ура ҫине тӑраҫҫӗ те, кино ҫинҫен пӗлтерекен хутсене хавасланса вулаҫҫӗ. Лайӑхрах, ҫуна килӗшмелле йапала ҫинҫен ҫырни пулсан, ҫӗтсе килесенех илсе каяҫҫӗ. Ҫапла вӑл. Шупашкар ҫаплӑ хула.

Улпут пек каҫҫӑ-маҫҫӑ пӑхкаласа ҫӳретӗп урам тӑрӑх. Пӗр иртсе кайакан ҫуна таптаса кайасран аран-аран пӑрӑнса йулнӑ хыҫҫӑн, пӑхатӑп—ман ҫумра Хӗрлӗ Хӗлӗп тӑраӗ, хамӑр йалсемех.

— Мӗн ӗҫпе килтӗн Шупашкара, тетӗп.

— Ӗҫ шырама килтӗм те, хырӑм выҫса карӗ, тет.

— Манӑн та хырӑм выҫма пуҫларӗ, аӗаха ҫав «Тай всойту» тенине кӗрсе апат ҫисе тухар, терӗм.

Хӗлӗп итлерӗ. Кӑсйери укҫана хыпашласа пӑхрӑм та, уттартӑмӑр Хӗлӗппе, леш, «Тай всойту» патнелле.

Пуш пахҫа витӗр карӑмӑр. Ҫитетпӗр столовӑй патне. Тиххӑн Ҫтеппанҫи, «Тай всойту» хуҫи, вывӗскине ҫӗнӗрен ҫырма панӑ пулмалла—вывӗски ҫук. Те вывӗскине хуликансем илсе кайнӑ.

Кӗретпӗр шала. Манӑн Хӗлӗп ыйтаӗ:

— Хуҫеин! Йашкӑ еҫт, тет.

— Каккой йашкӑ, теҫҫӗ.

— Ңам-ңам еҫт, терӗм епӗ.

— Хаҫ анҫах ҫакӑнта йашка ҫисе кайнӑҫҫӗске, тет ман Хӗлӗп тӗлӗнсе.

Пӗр ҫӑвашла сӑнлӑ аҫа иртсе кайаӗ. Унтан ыйтрӑмӑр та, вӑл:

— Кунта столовӑй мар, сут, хула суҫӗ кунта, терӗ.

Ах, каттӑршнӑй! Еҫмелли шырама ҫиркӳве кайнӑ пек пулҫиҫ ку! Ҫапла ҫав: епӗр пурнӑҫа хӑринҫен те тытса йулаймастпӑр, вӑл пиртен тарсах пыраӗ. Халӗ анҫах унта столовӑйҫҫӗ, халӗ столовӑйран сут пулса кайнӑ. Сутйере, леш, Тиххӑн Ҫтеппанҫийех лараӗ-ши, йе урӑххи кӗрсе ларнӑ, тесе ыйтрӗ манран ҫак халапа каласа паракан йулташ.

— Мӗн калас сана, терӗм епӗ ӑна.

—Пурӑнӑҫ малаллах шываӗ ҫав. Ҫав ҫуртра халӗ ратно опҫӗстви ӗҫлет, халӑх сутне унтан урӑх ҫӗре куҫарса кайнӑ, пӗтӗм хуҫӗ-мӗнӗпех куҫарнӑ, терӗм.

— Ку та темиҫе ернерен куҫаӗ пуҫ, терӗ ман ҫӑваш.

— Ку куҫмасӗ. Куҫсан та ҫав пысӑк ҫурта ҫеҫ куҫма пултараӗ, терӗм ӑна лӑплантарса.

Арӑмӗнҫен уйӑрлса кайакан упӑшка пекех, уҫрештенисем ӗлӗк пурӑннӑ вырӑнсене пӗр хӗрхӗнмесӗр пӑрахса кайаҫҫӗ. Тӗлӗнмелле вӑл уҫрештенисенҫен!

ИЛСАРАЙ.

## Арӑм хуйхи.

Пӗрре ман пата пӗр арӑм килҫӗ,
Куҫран пӑхрӗ те тути йӑл кулҫӗ,
— Есӗ миҫере терӗ те мана,
— Ма, кирлӗ ман ҫул? терӗм еп ӑна.
Ак тытӑнҫӗ вӑл йумах калама,
Куҫӗ тытӑнҫӗ йӑл-йӑл выҫама.
Йумахӗ йуплӗ, канашӗ картлӑ,
Хӑш-хӑш сӑмахӗ тем пекех хаклӑ.
Арӑм хуйхипе хытӑ итлерӗм,
Хӑш-хӑш сӑмахне ҫырасах терӗм:
— Арӑм тени вӑл, хӑй упӑшкинҫен
Пилӗк ултӑ ҫул ҫамрӑкрах пултӑр.
Ӑҫта кайсан та хӑйӗн мӑшринҫен
Килӗнҫе пӗҫҫен тӑрса ан йултӑр.
Аҫа-пӑҫа туса, пӑхса пурӑнса
Хӗрарӑм питӗ хӑвӑрт ваталаӗ.
Арҫын вӑл хӑшӗ пит усал пулаӗ
Ватӑлиҫҫенех кӑмӑлӗ выҫаӗ.
Ӑна пӗҫенҫи ҫӗрле ҫӳретме
Пит хӑрушӑ пек туйӑнаӗ мана.
Такам тӗл пулаӗ вӗсене унта,—
Маттур майрасем пит нумай кунта.
Епӗ те ҫавӑ хамӑн арҫынтан
Тӑват пилӗк ҫул асӑрах пултӑм.
Усал сӑмахсем ҫӳренипеле
Хам та, кӗретех—хӑраса йултӑм.

ШЕЛЕПИ.

## Хаклӑ парне.



— Хӑҫан есӗ, савни, пӗр-пӗр парне парӑн мана. Ытти хӗрсем савнисене йенӗӗк, тутӑрсем параҫҫӗ, а есӗ...

— Тата пӗр виҫ-тӑват уйӑхран туса парӑп.

— Халех каламӑн-ши—мӗнле парне туса парас тетӗн есӗ?

— Сӑпкара сиктермелли парне.

Иехрим Иванӗ.

## Иал кулли таварсем.

— Тӑвар пури сирӗн? Шур ҫӑнӑх та кирлӗӗӗ те... пур-и?

— Ку йышши таварсем ҫук-ха... ак путрӑ пур, туххи, хӗрессем пур, латӑн...

— Вӗсем кирлех мар-ха... краҫҫин пур-и тата?

— Краҫҫина тытмастпӑр... Йухса нумай пӗтет... ак йӑвӑҫ ҫӑвӗ пур, ерех тӗрлӗрен... илсе тутанса пахмастӑн-и?

— Кай, кай... йӳнӗрех ҫитсӑ пури-и?

— Ҫитсӑ ҫук... ак атлӑс, пурҫӑн, патша ӗухнехи улпут майрисем тӑхӑнакан пурҫӑн... ак французски саршанӗин, пурҫӑн ӗисуӗа... киҫҫейа...

— Ах-ха-ха!.. Кунтан кӗпе туса ӗӗлесен ун виттӗр тем те курӑнаӗ пуӗ? Кай, кирлех мар. Тата ҫын кулӗ..

## Пуҫ ҫавӑракан.

— Пайан епӗ пӗр хӗр пуҫне ҫавӑртӑм.

— Мӗнле ҫавӑртӑн?

— «Капкӑнпа».

— «Капкӑна» хӗстерсе ҫавӑртӑни?

— Ҫук. Ҫеркей Аннине пӗр ҫулталӑклӑх «Капкӑн» илсе патӑм та, ҫаврӑнӗӗ.

Уҫҫука.

## Халӑха йуракансем.

— Есӗр тавар хакне ма йӳнӗлетместӗр?

— Халӑха йурама ҫук... Илтнӗ пуӗ: йӳнӗ тавар йӳнеҫтерет—ӗухӑн мулне пӗтерет,—тенине. Ҫавӑнпа йӳнетмеспӗр.

## Вӑхӑт иртнипе кӗрешекен.



— 9 сехетре килетӗп, терӗ. Килмерӗ. Йуратни пуӗӗи вӑл? Вӑхӑтра килменшӗн ыран комсомол сопранинӗе выкӑвӑр парас пулаӗ-ха.

# Тискер хут.




**Ай, аЂамăрсем, пĕтрĕмĕрех! Хут сĕтел çине хăпарса кайнă. Ђей ĕçсе лараĭ. Çынни, мĕскĕнĕ, сĕтел айĕнЂе луЂăртанса выртӑ. О-о-о-о-о-о-о-о-х.**

## Хӗрес сатађђи.

(Митка шухӑшласа кӑларнӑ.)



Ҫакӑнти сас паллисене куҫарса лартмалла. Ҫӳлтен айалалла, сулахайран сылтӑмалла, ушкӑнпе пилӗк сӑмах туса вуламалла.

## Шаратӑ 1-мӗш №.

(Митка тунӑ.)

Мана ҫурмаран уйӑрсан—
Урапа-ҫуна ӑстисем
Мансӑрӑн нихҫан та ӗҫлеймеҫҫӗ.
Икӗмӗш пайӗнђе: ђи асли пулатӑп.
Епӗ ҫуралман пулсан тӗнђипе те
Пӗр уђрештени те пулас ҫук.
Ҫапла вара икӗ пайне пӗрлештерсен
Халӑхсем мана таптаҫҫӗ,
Ман ӑшӑмра вут ҫунат̆
Манӑн вайӑм пит нумай,
Ҫапах шывран тухас ҫук.

## Сатађ тупписем.

«Капкӑнӑн» 2-мӗш нумӗрӗнђе ҫапӑннӑ сатађӑн туппи ҫапла:
1) 1, 2, 3, 2,4,2,5,6,2,1=СӗтӗрӗнђӗК
2) 8, 4, 9, 10=У р п А
3) 5, 11, 12, 4, 13, 9=Н ӳ х р е П
4) 3, 10, 14, 15, 7=Т а л ӑ К
5) 10, 14, 14, 15=А л л Ӑ
6) 14, 10, 16, 17, 10, 5=Л а ш м а Н

Сатађ туппине малтан шутласа кӑларакансем ҫаксем пулђӗҫ: Пулӑҫа, Васҫилйӗв С., Терентйӗв А., Варвара Ефимӑва, Петрӧв Алексантр. т. ыт. те.

## КОРЕСПОТЕНТСЕНЕ.

— **Иван Пешина.** Санӑн пуҫу пит ӑслӑ: «Лаппӑт̆» шурналӑн 6(54)-мӗш нумӗрӗнђе ҫапӑннӑ фелйеттона ђӑвашла куҫарнӑ та, Айпе Иван Пешин тесе ал пустарасшӑн. Ай-ай пултаратӑн, —паллӑ фелйеттонис пуласси курӑнсах тӑрат̆.

— **Шапана, Пахтамана, Асрамайа.** Сире виҫҫӗре те пӗр сӑмах: нађар. Мӑнтӑрланма тӑрӑшӑр.

— **Тене.** Ниме йурӑхсӑр йапаласем ҫинђен ҫыратӑн. Ун пек вӑтанмасӑр ҫырнӑ калавсем тӳрех ретаксири корҫинккӑ ӑшне кӗрсе ӳкеҫҫӗ, „Капкӑн" ун пек вараланђӑксемпе аппаланмаст̆.

— **Петука,** „Капкӑн" илме ӑҫтан укҫа тупас, атте укҫа памаст̆, тетӗн. Макӑр. Макӑрман ађана никам та ђӗ памаст̆.

— **Пур кореспотентсене те.** Пӗрер пӳрократ та пулин тытса парайман ҫын, „Капкӑн" кореспотенђӗ пулаймаст̆. Пӳрократ текенисем кашни уђрештенирех пур. Шырӑр анђах.

## Репус.



# Пуриншӗн те...



—, Кирек-хӑш пӳрнене кассан та ыратать. Ку пулас алиментлӑ арӑм, ку хамӑр йал, хам арӑмӑн тусӗ, ку кумма, кун пиҫӗсем илемлӗ. Пӳрне тени хам йепеллех кукӑрма йурататьҫке.

Ответ. редактор **А. Золотов**.

Чувашлит № 1579 Чебоксары, тип. „Чувашская Книга".